Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* 110 N (4679) *1998 çулхи сентябрь (авăн) уйăхĕн 26-мĕшĕ, шăматкун* *Палăртнă хакпа.*

## "Тухăç-98" пресс-группа пĕлтерет

Çумăрлă кунсем пуçланни никамшăн та ăнсăртран пулмарĕ. Ĕçе вăхăтлă пурнăçлама тăрăшакан хуçалăхсем çĕртме сухалассине хура кĕркуннене хăварман. Çапла, Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Сĕнче", "Дуслык" ассоциацисенче, "Агрохимсервисăн" тата сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕсенче çак ĕç шутлă гектарсенче çеç юлнă. Районта юлашки кун 800 гектар ытла çĕртме суханă, плана пурĕ 76 процент пурнăçланă. "Черемшан" агрофирмăра, Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Татарстан", "Алга" ассоциацисенче, РСУн тата сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕ малтанхи пекех ку ...ĕшпе мухтанма пултараймаççĕ, сухалакан агрегатсен пĕр кунхи ĕç тухăçлăхĕ те пĕчĕккĕ.

Хальхи вăхăтра иккĕмĕш ĕççие хăвăртлатма та техника кирлĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районта 2362 гектар сахăр кăшманĕ кăларнă. Пĕр кунта кăларнă тутлă тымар 227 гектар шутланать. Ку ĕçе "Татарстан" хуçалăхра хăвăртлатнă, юлашки кунсенче "Надежда" агрофирмăра, "Рассвет", "Киклĕ", "Игенче", Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, "Алга" ассоциацисенче те ĕç хăвăртлăхĕ начарах мар. "Тан", "Чулпан" ассоциацисенче, сĕт-çу комбиначĕн тата сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕсенче чĕкĕнтĕр кăларакан агрегатсен тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ.

Çав вăхăтрах чĕртавара завода турттарас задача çивĕч тăрать. Çавăнпа та чĕкĕнтĕре тиенĕ чухне тăкăннине те кăлармасăр юлнисене пуçтарассине йĕркелессине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Юлашки кунра хирти кагатсем патне пин çурă тонна чĕкĕнтĕр турттарнă, çапла майпа завода 11700 тонна яхăн чĕртавар илсе килнĕ. Сентябрĕн 23-мĕшĕнче "Кондурча", Хафизов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенчен чи нумай чĕртавар илсе килнĕ, вĕсенчен пĕрремĕшĕ завода 1400 тонна чĕкĕнтĕр ăсатнă. "Надежда" агрофирма - 2800 тонна ытла, "Киклĕ" тата "Рассвет" ассоциацисем те 1800-шер тонна чĕртавар тиесе ăсатнă. "Татарстан" ассоциацирен, "Черемшан" агрофирмăран тата сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕнчен сентябрĕн 23-мĕшĕнче чĕкĕнтĕр тиенĕ пĕр машина та завода килмен. Хатĕр чĕртавара турттарассине хăвăртлатас тĕлĕшпе район ертӳçисем мĕнпур мерăсемпе усă курма тăрăшаççĕ. Промышленность предприятийĕсенчен кăна кунсерен 60 яхăн машина яраççĕ. Çак ĕçе маркетинг службин департаменчĕ, нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управлени, "Татнефть-Нурлатнефтешырав" ООО, УМС яваплăх туйса пурнăçлаççĕ. Ытти организацисем те çавăн пек активлăх кăтартасса шанас килет, çав шутра машинăсем тăвакан завод, 53-мĕш номерлĕ строительствăпа монтаж управлени тата "Бентокам", вĕсен те транспорт хатĕрĕсем пур вĕт. Сахăр завочĕ хăй те тутлă тымар акса ӳстерекен хуçалăхсене пĕр пек тимлĕх уйăрсан лайăх пулмалла. Ăнсăртран мар ĕнтĕ "Елховнефть" управленин вунна яхăн техникине чĕртавар турттарма явăçтарнă.

Кукуруза пухса илес ĕçе те вăраха тăсмалла мар, кăçал ăна силоса кăна хывма тӳр килет. Анчах та юлашки кунра ăна 100 гектар çинчен те пухса илеймен. Хресченсен хуçалăхĕсен Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче çеç ĕç хăвăртлăхĕ начар мар, ыттисенче вара кукурузăна пурĕ те 5-10 гектар çинчен кăна пухса илнĕ-ха.

Район тăрăх 74 пин тонна силос хывнă. Сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче ăна çулталăка кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ, "Тан", Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче те хатĕрлесе çитернĕпе пĕрех. Вĕсенчен юлашкинче пĕр условнăй выльăх пуçне 26 центнер ытла апат единици хатĕрленĕ. Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Урняк", "Алга", "Дуслык", "Тĕрнеç", "Заветы Ильича" ассоциацисенче, сĕт-çу комбиначĕн, нефтебазăн хушма хуçалăхĕсенче те çак тĕлĕшпе ĕçсем япăх мар.

Çапах та пулас тухăç шăпи пăшăрхантарать. Çапла, çурхи культурăсен вăрлăхне хывас ĕç малтанхи пекех, тивĕçлĕ шайра мар-ха, мĕнпур лаптăксене апатлантарассине пурнăçа кĕртесси тата кĕрхи культура лаптăкĕсене ĕçлесе хатĕрлесси япăх пырать.



Нурлатри вăрман пункчĕн водительне Минсабир Галиуллина пирĕн фотокорреспондент Н.Азизов гаражра тĕл пулнă - çав КамАЗах, вăл çĕмрĕлмесĕр пултараймасть ĕнтĕ, çавăнпа та хуçана час-часах гайка пăркăчĕ тытма тӳр килет. Замир Харисович Низамеев технорук Минсабира тивĕçтерӳ водителĕ тет. Тĕрĕс, мĕншĕн тесен вăл потребителе вăрман хуçалăхĕн продукцийĕпе тивĕçтерет - чус хăмапа тата ыттипе. Ăна Хусана, Самара, Димитровграда тата ытти çĕре те кайма путевкăсем параççĕ. Вĕсем тиев шанчăклă водителĕн аллинче пулнине пĕлеççĕ.

Минсабир Галиуллин тӳрĕ кăмăлша вăй хурать, вăл урăхла пултараймасть те - хăй вăл кунта, вăрман хуçалăхĕпе çирĕп çыхăннă çемьере ӳснĕ. 1979 çулта Лениногорскри ДОСААФ шкулĕнчен вĕренсе тухнă, кайран Мари республикинчи вăрман техникумне пĕтернĕ. Тракторист пулса ĕçленĕ, бензовоз çӳретнĕ, 1984 çултанпа вара КамАЗ автомашинăпа инçетри рейссене çӳрет. Минсабир урăх çĕрте те пурăнса курнă, анчах та унăн кунтан ниçта та каясси килмест, ку тĕлĕшпе вăл çапла шутлать: "Ăçта çуралнă, çавăнта ĕçле".

## Иккĕмĕш ĕççи мĕнле пырать?

***Сентябь уйăхĕн 25-мĕшĕ тĕлне сахăр кăшманĕ кăлармалли плана пурнăçланă (процентпа).***

| | |
|---|---|
| "Игенче" | 80 |
| "Рассвет" | 55 |
| "Татарстан" | 54 |
| "Надежда" агрофирма | 46 |
| "Кондурча" | 46 |
| "Киклĕ" | 42 |
| Нефтебазăн х/х | 42 |
| "Алга" | 41 |
| Сĕт-çу комбиначĕн х/х | 40 |
| "Заветы Ильича" | 39 |
| М.Джалиль яч.хис. | 36 |
| "Черемшан" агрофирма | 26 |
| Сахăр завочĕн х/х | 26 |
| "Урняк" | 25 |
| "Чулпан" | 23 |
| Хафизов яч.хис. | 22 |
| Синдряков яч.хис. | 20 |
| "Тан" | 19 |
| **Район тăрăх** | **36** |

## Ватă çынсен уявĕ тĕлне

Октябрĕн 1-мĕшĕ - Ватă çынсен кунĕ - календарьти датăсенчи уйрăм кун: çав кун эпир хамăрăн хаклă ветерансене чыслăпăр, пирĕн асаннесен, асаттесен, аттесемпе аннесен çамрăклăхне аса илĕпĕр. Çавăнпа та йывăрлăхсене пăхмасăр уяв пулĕ! ТР Министрсен Кабинечĕ çапла йышăннă, нумаях пулмасть иртнĕ халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн сессийĕнче хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин та хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ. Тĕплĕнрех каласан çапла пулать: предприятисем, организацисем, учрежденисем хăйсен ветеранĕсене тăван коллективсене чĕнĕç, апат-çимĕçпе сăйлĕç, концерт номерĕсемпе савăнтарĕç, май пулсан вара апат-çимĕç пакечĕсем парĕç. Пур çĕрте те пенсионерсене пулăшĕç: вутă илсе килсе касма, кăмрăк илсе килме, хваттерсене тирпей-илем кĕртме, вак-тĕвек юсав ĕçĕсем пурнăçлама. Кунта, паллах, шкулта вĕренекенсене те хутăштармалла. Ватă çынсен кунĕнче хулара тата ялсенче мĕнле мероприятисем пулассине эсир хаçатăн çитес номерĕнче вуласа пĕлĕр.

### Телефон шăнкăртатать...

Нурлатри РУЭС коллективĕ Ватă çынсен кунĕ тĕлне лайăх пуçару турĕ. Çыхăну ĕçченĕсем Карл Маркс проспектĕнчи 42 хваттерлĕ ветерансен çуртĕнче телефон кĕртме тытăнчĕç. Хальхи вăхăт тĕлне кунта 20 ытла телефон вырнаçтарнă ĕнтĕ.

Ку ĕçе çак уйăх вĕçнелле пурнăçласа пĕтерме шутлаççĕ.

## Культура çурчĕсене тимлĕх уйăрмалла

Юлашки çулсенче районти культура пайĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçченĕсен ĕçĕн çулталăк тĕрĕслевне тата малашлăха задачăсем палăртассине практика кĕрте пуçларĕ.

Кăçал та пай методисчĕсем тата библиотека системин ĕçченĕсем кашни культура çуртĕнче, клубра, библиотекăра пулчĕç, кунти ĕçсемпе тата кадрсем хатĕрлессин шайĕпе паллашрĕç. Чылай культура учрежденийĕсене газпа хутса ăшăтасси çине куçарнă, хăшĕ-пĕрисенче çак ĕç тĕлне хатĕрленеççĕ. Çуртсенче капиталлă тата вак-тĕвек юсав ĕçĕсене пурнăçланă. Çак ĕçре чылайăшне вырăнти самоуправленисен органĕсем пулăшнă. Тĕслĕхрен, Кивĕ Чаллăри (В.В.Итрин директор), Кислеври (Ф.Ю.Вафина), Кăрмăшри (Н.Н.Залялова) культура çурчĕсем вырăнти самоуправленин органĕсемпе килĕштерсе вăй хураççĕ, Селенкĕшри культура çурчĕ çинчен çакна калаймăн. Ялти Совета унăн шăпи, çамрăксене воспитани парас, вĕсен канăвне усăллă ирттерессине йĕркелес ыйтусем пачах та хумхантармаççĕ. Ялти культура çурчĕсене валли ятарлă специалистсем хатĕрлес тĕлĕшпе те эпир мухтанма пултараймастпăр. Çакăн пек учрежденисен 53 ĕçченĕнчен виççĕшĕ çеç аслă пĕлӳ туяннă, çурри - ятарлă вăтам (тăваттăшĕ куçăмсăр вĕренеççĕ), ыттисем - вăтам пĕлӳ. Халь çирĕп требовани тăратаççĕ - çамрăксен ятарлă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕмелле, аслăрах ăрурисен вара Хусанти культура академийĕ йĕркеленĕ курсра хăйсен пĕлĕвне ӳстермелле.

Библиотекăсене илсен вара, вĕсенче специалистсем нумайрах. Библиотекăсем мĕнле ĕçлесси нумай енчен вĕсен заведующийĕсен хатĕрленĕвĕнчен, ăсхакăл шайĕнчен килет. Çапла, Кульбаево-Мараса ялĕнчи бибиотекăра (заведующийĕ Т.И.Мингалиева) пулса курнисем кунти творчество лару-тăрăвне асăрханă ĕнтĕ. Кунта периодикăпа ăста усă кураççĕ, ял историйĕпе пурнăçĕ çинчен хатĕрленĕ стендсем нумай, тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ. Кăчăканлăри (заведующийĕ Д.Р.Мансурова) тата Тури Нурлатри (М.З.Аглиуллина) библиотекăсем те активлă ĕçлеççĕ.

Чылай библиотекăсем, культура çурчĕсем пекех, "тăван мар ача" вырăнĕнче. Вĕсенчен чылайĕшĕшĕн юсав ирттересси, çĕнĕ кĕнекесем туянасси пурнăçланман ĕмĕт шутланать. Юлашки 10 çул хушшинче ялти библиотекăсене тăван чĕлхе изданийĕсемпе тивĕçтерменни те хытă пăшăрхантарать. Çакна нимĕнпе те тӳрре кăларма çук. Мĕнле самана пулсан та, пирĕн халăх кĕнекесене, юрăташăсене манман, пачах урăхла, вĕсем пулăшнипе çирĕп кăмăла, шанчăка упраççĕ.

**Г.АГЛИУЛЛИНА,**
**районти культура пайĕн методисчĕ.**

# Пĕрлештернĕ Совет йышăнчĕ...



Маларах пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ, ытларикун пĕрлештернĕ Нурлат Совечĕн черетлĕ вунçиччĕмĕш сессийĕ иртрĕ. Сессие вырăнти самоуправленин Совечĕсен председателĕсемсĕр, хулари предприятисемпе организацисен тата учрежденисен ертӳçисемсĕр пуçне шкул директорĕсемпе шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен заведующийĕсене чĕннĕччĕ. Тишкерсе тухмалли тĕп тема тӳрех палăрчĕ. Вăл Нурлатри ГРОВД подразделенийĕсен 1998 çулхи 8 уйăх хушшинчи ĕç итогĕсен отчечĕ пулчĕ. Ку ыйту, район Совечĕн ĕçĕн çулталăк планне кĕртнĕскер, хăй тĕллĕн ăнсăртран тухман. 1997 çулта иртнĕ сессисенчен пĕринче пĕрлештернĕ Советăн председателĕ **Ф.С.СИБАГАТУЛЛИН** сессисен ĕçне отрасльсенчи отчетсене кĕртме сĕнчĕ, пĕрлехи отчет кăна мар, структура подразделенийĕсем тăрăх та. Кунта ГРОВД начальникĕн криминал милици тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ **В.Л.ГАВРИЛОВ** тата уйрăмсен начальникĕсем - участоксенчи инспекторсен ĕçне ертсе пыракан - **Ф.Т.ДАШКИН**, çулсем çинче çӳрессин хăрушсăрлăх госинспекцийĕн - **Х.В.АЮПОВ,** çула çитмен çамрăксем хушшинче преступлени тăвассине сирсе ярас тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăмăн - **Н.Г.КУРБАНОВ** тухса калаçрĕç. Пай начальникĕн çумĕн отчетне район Совечĕн председателĕ критиклесе хакларĕ. Тухса калаçакансене ыйтусем чылай пачĕç, вĕсене пурне те тенĕ пекех сессие ертсе пыракан пачĕ. Çапла майпа ГРОВД уйрăмĕсен начальникĕсене тулли программăпа явап тытма тӳр килчĕ. Объектсене, техникăна хураллассине йĕркелеменнипе хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсенчен, предприятисенчен выльăх-чĕрлĕх, авторезина тата ыттине вăрланă тĕлĕшпе ертӳçĕсем, пурлăх енчен яваплă çынсем тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăннă? Çакăн пек лару-тăрăва тишкерсе тухакан ĕç коллективĕсен пухăвĕсене уйрăм начальникĕсем час-часах хутшăнаççĕ-и? Эрех вăрттăн сутакан çынсене мĕншĕн тивĕçлĕ явап тыттармаççĕ-ха? ОПППН учетĕнче 5 наркоман çеç тăрать пулин те, ку цифра чăннипех çапла-и? Çак тата ытти ыйтусем çине хуравлани отчета чылай пуянлатрĕ. ГРОВД начальникĕ **В.В.ИВАНОВ** конкретлă тата объективлă тухса калаçрĕ. 1998 çулхи 8 уйăх хушшинче хулара тата районта 346 преступлени тунă, ку вăл пĕлтĕрхи çак тапхăрти шайпа



танлаштарсан 28,1 процент ытларах. Йывăр преступленисен удельнăй виçи те ӳсрĕ. Преступленисене тупса палăртасси начар пулнине те палăртса хăвармалла. Преступленисен шучĕ ирĕксĕрлесе мăшкăлланин, ӳтпĕве йывăр суранлатнин, вăрланă, çулйĕрсем çинчи инкексен, автомототранспорта хăваласа кайнин тĕслĕхĕсене пула ӳснĕ. ГРОВДăн тĕп службин ĕçĕсене тишкерсе тухса ăна хакланă хыççăн депутатсем ОПППН активлăхне ырларĕç. Кадрсен ыйтăвĕ çинче чарăнса милици начальникĕ граждансен хăйсен тата пурлăх хăрушсăрлăхне тивĕçтерес, район территорине Тутарстанпа Самар хулисенче йĕркеленнĕ преступленисен ушкăнĕсене кĕртес мар, оперативлă шырав ĕçне çĕнетес, экономика сферинчи преступленисене хирĕç кĕрешессине вăйлатас, преступленисен профилактикин шайне ӳстерес, çав шутра уйрăмах çула çитмен çамрăксем хушшинче, личнăй составăн професси хатĕрленĕвне лайăхлатас тĕлĕшпе задачăсем палăртрĕ. Наркотиксене хирĕç кĕрешес ыйтăва та тимлĕх уйăрмасăр хăвармарĕç. Паллах ĕнтĕ, ку ыйту тĕлĕшпе тивĕçлĕ органсем çеç мар, пĕтĕм общество ĕçлемелле. Пĕтĕмĕшле илсен, Нурлатри ГРОВДăн личнăй составĕ хăйĕн умне тăратнă задачăсене пурнăçлама пултарать. ГРОВД отчечĕн пренийĕсенче район прокурорĕ **А.П.ЕВГРАФОВ** тухса калаçрĕ. Вăл ГРОВД ĕçĕнчи пăшăрхантаракан темиçе саманта палăртрĕ. Вĕсем мана район прокурорĕ пулнă май тата та ытларах хумхантараççĕ, терĕ вăл. Дежурство службин тата участоксенчи инспекторсен ĕçне йĕркелесси. Ку пĕрремĕшĕ. Уголовнăй шырав службине тĕреклетесси вăраха кайни - иккĕмĕшĕ. Наркомансен шучĕ ӳсни тата венери чирĕсем сарăлни. Ку виççĕмĕшĕ. Тăваттăмĕшĕ - çулсемпе çӳрессин хăрушсăрлăх ĕçĕнчи лару-тăрăва район прокурорĕ "çулсем çинчи вăрçă" тесе палăртрĕ, ку тĕлĕшпе конкретлă мерăсем йышăнма сĕнчĕ. Районти прессăпа милицие те наказ памасăр хăвармарĕç: пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлемелле. (Редакцие илес пулсан, эпир пĕрле ĕçлеме хатĕр, автор - профессионалсене яланах тимлĕх уйăратпăр, информацие ялан йышăнатпăр). Çак ыйту тĕлĕшпе пренисенче депутатсенчен **А.И.САВИНОВ** тухса калаçрĕ. Отчета пĕр саслăн пулса тата тӳрлетӳсемсĕр йышăнчĕç.



Сессие малалла РУЭС начальникĕ **Р.А.ЗИГАНШИН** тăсрĕ, вăл çыхăну хатĕрĕсен шайĕ çинчен информаци пачĕ. Ăна пурте тимлĕн итлерĕç - залра ларакансем пурте телефон сечĕн абоненчĕсем пулса тăраççĕ вĕт-ха. 1998 çулта хулара 262 телефон вырнаçтарнă, ялта - 72. Кабель линийĕсем тăсас тата реконструкцилес, кабель канализацин строительстви, кивĕ сывлăш линийĕсене улăштарас, ялсенчи станцисене çĕнĕ аккумуляторсемпе монтажлас тĕлĕшпе пурнăçланă ĕç калăпăшне пĕлтернĕ хыççăн Р.А.Зиганшин татса памалли ыйтусем пуррине те палăртрĕ. Вĕсенчен чи кирли тĕп АТСа çĕннипе, 3 пин номертан кая маррипе, улăштарасси пулса тăрать. Çыхăнăва аталанма кансĕрлекен факторсенчен пĕри чылай хуçалăхсем парăмлă пулни (5-6 тата ытларах та çул) шутланать. РУЭС начальникĕн пĕрлештернĕ Совет председателĕн тата Р.Ш.Хафизов депутатăн ыйтăвĕсем çине те хуравлама тӳр килчĕ. Ыйтăва 1999 çулхи пĕрремĕш кварталта çĕнĕрен пăхса тухма тата министра района килме чĕнме йышăнчĕç. Лайăх çыхăну пире сывлăш пекех кирлĕ вĕт.

Кун йĕркинчи тăваттăмĕш ыйтупа РОО заведующийĕ **Г.А.ЮНУСОВ** тухса калаçрĕ. Халăх депутачĕсен район Совечĕн "Районти пай, педагогика коллективĕсем тата вĕрентӳ учрежденийĕсем хальхи вăхăтпа килĕшӳллĕн ĕçлесси çинчен" йышăнăвне мĕнле пурнăçлани çинчен ирттерсе, хитрелетсе каланă пек туйăнчĕ, çакă Ф.С.Сибагатуллина пăлхантарса ячĕ: шкулсенче вара халь çитменлĕхсемпе ыйтусем çук-ши? Тӳрех темиçе ыйту пулчĕ: ОПППН "заметкине" вĕренекенсенчен миçен лекнĕ, стадионпа мĕншĕн начар усă кураççĕ, ачасен сывлăхне çирĕплетес тесен, чи малтан, спортпа туслă пулмалла (ахальтен мар ĕнтĕ 1998-1999 вĕренӳ çулĕ çакăн пек паллăпа иртет), шкулсем çумĕнче лайăх спорт площадкисем çук, шкулсен пахча çимĕç ӳстермелли участоксем пулмалла-и тата ытти те. Çав вăхăтрах А.И.Савинов вĕри апат çитерессине йĕркелесси, шкулсенчи медицина пункчĕсене медикаментсемпе кирлĕ пек тивĕçтерменни çинчен каларĕ, наци вĕренĕвĕ çинчен каланă май, Нурлатра тутар шкулĕ уçас ыйтăва тепĕр хут пăхса тухма сĕнчĕ.



Нурлат хула территорине зонăсене уйăрасси çинчен районти çĕр комитечĕн председательне **В.А.ШИЛОВА** сăмах пачĕç. Вăл депутатсене çĕр налукĕн вăтам ставкин коэффициенчĕ тата зонăсене пăхса çĕр налукĕн ставкине ӳстерни çинчен пĕлтерчĕ. Коэффициентсене Тутарстанти çĕр йĕркелӳ проектпа шырав предприятийĕн çĕрсене хак паракан Агенствăра ĕçлекен специалистсем 1997 çулта ĕçлесе хатĕрленĕ. Коэффициента йышăнассин тĕп сăлтавĕ, налук хурассинче вырăнти бюджета йĕркелессине, çĕре харпăрлăха, еткерлĕхе парассине, парнелессине тата банк кредитне илессине майласа яма пулăшать. Çапла майпа, Нурлата зонăсене пайлĕç, налук та çавсемпе килĕшӳллĕн пуçтарĕç. Паллах ĕнтĕ, хула варринче, инфраструктура аталаннă çĕрте налуксен калăпăшĕ пĕр тĕрлĕ, аякинчисен вара тепĕр тĕрлĕ пулни каламасăрах пурне те паллă. Çакна та каласа хăвармалла, ку ыйтăва малтанлăха пăхса тухнă, çавăнпа та депутатсем ку ыйтăва черетлĕ сессисенчен пĕринче тепĕр хут хускатĕç. Коэффициентсене халлĕхе йышăнмарĕç-ха. Депутатсене тӳрех çĕр уйăрса панăшăн тата çĕр участокĕсемпе яланах усă курнăшăн пĕр хутчен тӳлессин калăпăшне палăрас ыйтăва татса пама хушрĕç. Граждансемпе организацисемшĕн уйрăм. Кĕскен каласан, кунта мĕнле те пулин объектсем хăпартас текенсен тăрăшма тӳр килĕ. Çапла, уйрăм çынсене гараж е сарай тума участок уйăрса парсан, вĕсен пĕр тăваткал метршăн 6 тенкĕ тӳлемелле, коммерци (суту-илӳ) тĕллевĕсемшĕн пулсан вара (пулас тупăш шутĕнчен!), пĕр тăваткал метрĕшĕн 30 тенкĕ тӳлеме тӳр килет. Юридически çынсем производство тата коммерци тĕллевĕсемшĕн объектсем хăпартнăшăн вара сахалрах - 15 тенкĕ. Депутатсене мĕнпе танлаштарма май пултăр тесе çĕр комитечĕ таблица та хатĕрленĕ: Хусанта, Çыранçи Чаллăра, Чистайра мĕн чухлĕ тӳлеççĕ... Нурлатра сахалтарах тухать. Тепĕр тесен, ку ыйту та пĕлĕтрен йăтăнса анман - Тутарстан Республикин "Çĕршĕн тӳлемелли çинчен" Законне пăхса (7-мĕш статья) йышăннă решени пурнăçа кĕнĕ ĕнтĕ.

Кайран сесси Ю.А.Муракаева коммуналлă пурлăх тĕлĕшпе ĕçлекен управленин комитет председателĕ пулма çирĕплетрĕ тата хăйĕн решенийĕпе районти патшалăхăн ветеринари пĕрлешĕвĕн, ветеринари баклабораторийĕн, патшалăх вăрлăх инспекцийĕн тата нумай çул ӳсекен курăксем тĕлĕшпе ĕçлекен вăрлăх станцийĕн куçман пурлăхне коммуналлă харпăрлăха пама йышăнчĕ. Çакна çуртсемпе усă курассине, тытассине, юсассине лайăхлатас тĕллевпе тунине ăнланмалла ĕнтĕ.

* * *



Сесси вĕçленнĕ хыççăн Ф.С.Сибагатуллин ертӳçĕсене пурне те Ватă çынсен кун çывхарни çинчен аса илтерчĕ. Финанс ыйтăвĕ мĕнле йывăр пулсан та, ветерансене коллективсене чĕнсе чей ĕçтерессине йĕркелемелле тата апат-çимĕç пуххисем памалла. Май пур таран. Çаплах вăл ял çыннисене çутçанталăк газĕ кĕртме укçа тӳлеме тăрăшмаллине ăнлантарса пама ыйтрĕ. Пĕлетпĕр, укçа-тенкĕ тĕлĕшпе питĕ йывăр, анчах та пăрăхсен хакĕсем ӳсеççĕ, çĕнĕ çултан вара тата хаклăрах пулĕç. Вутă тата кăмрăк туянасси тата топливо илсе килесси те йӳнех мар вĕт. Бюджетниксене ĕç укçи хăçан тӳлесси хула тата район администрацийĕн пуçлăхĕ каланă тăрăх, магазинсенче эрех сутнин тата Нурлатри сахăр завочĕ сахăр туса кăларнин шайĕнчен килĕ.

**Т.НАЗАРОВА.**

**Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕсем.**

** Уяв юррисем*

## Питĕ ĕçчен пулинччĕ

*Кăçал илнĕ çĕнĕ çын*
*Питĕ ĕçчен пулинччĕ.*
*Утă çулма тухсассăн,*
*Çава витмест теминччĕ.*

*Ыраш вырма пуçласан,*
*Çурла касмасть теминччĕ.*
*Тулă вырма тытăнсан,*
*Турткаланса тăминччĕ.*

*Сĕлĕ вырма тытăнсан,*
*Сĕлкĕшленсе тăминччĕ.*
*Пăри вырма пуçласан,*
*Пăркаланса тăминччĕ.*

*Пăрça çулма тытăнсан,*
*Пăрça çисе тăминччĕ.*
*Ясмăк вырма пуçласан,*
*Ясарланса тăминччĕ.*

*Урпа вырма тытăнсан,*
*Ура явса тăминччĕ.*
*Çĕрулми пухма тухсан,*
*Сĕркеленсе тăминччĕ.*

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

## Вăхăта хаваслă ирттереççĕ

**1990 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн республикăра ачасемпе çамрăксен организацине - Тутарстан еткерçисен Союзне йĕркеленĕ.**

Унтанпа 8 çул иртнĕ. Ытти çĕнĕ ĕçри пекех, кунта та ыйтусемпе йывăрлăхсем чылай пулнă, çавăнпа пĕрлех тава тивĕçлисем те пур, сахал та мар. Республикăри хуласенче, ялсенче тата поселоксенче йĕрлевçĕсемпе еткерçĕсен пин-пин отрядне йĕркеленĕ, вĕсем ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Çав çулсем ачасемшĕн усăллă пуласса шанас килет. Йĕрлевçĕсем патĕнчен еткерçĕсем, еткерçĕсем патĕнчен вĕрентекенсем çула иртсе вĕсем хăйсен тăван енне пĕлме тата юратма вĕренеççĕ. Тĕрлĕ походсенче пулса туризм хăнăхăвне алла илнĕ, пĕрремĕш медицина пулăшăвĕ пама вĕреннĕ, юлташлăх туйăмне туйма, хăвăншăн тата ыттисемшĕн яваплă пулас туйăм çуралнă. Интелектуаллă вăййăсене тата шоусене хутшăнса хăйсен тавракурăмне аталантарма пултараççĕ.

Тутарстан еткерçисен Союзĕ çуралнă кун еткерçĕсене - çак юхăмăн активисчĕсене чысларĕç, вĕсем валли Çамрăксен çурчĕн залĕнче ачасемпе çамрăксен центрĕн коллективĕпе пĕрле конкурссемлĕ, вăййăсемлĕ дискотека йĕркеленĕччĕ.

**А.ГАЛЯУТДИНОВА,**
**ачасемпе çамрăксен центрĕн директорĕ.**
**Т.ГРАФ,**
**ачасемпе çамрăксен центрĕн методисчĕ.**

*Манăн кĕрĕк пур. Хĕллехи шартлама сивĕсенче сывлăха упрать вăл. Анчах пурăна киле çак тумтир çинче пăнчăсем пуррине асăрхарăм. Химчисткăна илсе кайма шикленсе тăратăп: "пуçĕпех" тасатма пултараççĕ е кĕрĕкĕн тŷмине кăна хăвараççĕ. Килти условисенче тĕрлĕ пăнчăсенчен мĕнле меслетпе хăтăлма пулать-ши?*
*В.СЕМЕНОВА.*

## Кĕрĕке мĕнле тасатмалла

Кирек мĕнле тумтире те çийĕнчех тасатма тăрăшмалла, тин "лартнă" пăнчăсене тасатма чылай çăмăлтарах.

Тумтире тасатнă чухне тĕрлĕ шĕвекпе, имçампа усă курма юрать. Вĕсен шутне аммиак, спирт, ацетон, бензин, нашатырь спирчĕ, водород перекисĕ, сода, хлор тата ыттисем те кĕреççĕ.

**Çуллă пăнчăсене** пĕтерес тесен бензинпа, ацетонпа е тасатнă скипидарпа усă курмалла. Нашатырь спирчĕ те пулăшать (тата вăл яланах ал айĕнче вĕт), анчах çакна шута илмелле: унпа усă курнă хыççăн тир тĕсĕ улшăнма пултарать.

**Урамри пылчăкпа** варланнă кĕрĕке малтанах çакса типĕтмелле, унтан тумтир щеткипе тасатмалла. Çакăн хыççăн та таса мар йĕр юлсан, талькпа (ăна аптекăра сутаççĕ) бензин е скипидар хутăштарса йăваламалла. Кайран ку вырăна ăшă шывра йĕпетнĕ супăньпе çуса ярăр.

**Улма-çырла шĕвекĕ** лекнĕ вырăна çийĕнчех ăшă шывпа çуса ямалла. Таса мара каярах асăрхарăр пулсан, çав вырăна апат тăварĕ сапăр та, кăштах вăхăт иртсен, ăшă шывпа çуса тасатăр.

Кĕрĕке **шал енчен** тасатас тетĕр пулсан, çакнашкал меслет пур: денатурат спирчĕ тата аммиак шывĕ (пĕр пек виçепе) хутăштарсаваткăпа сăтăрмалла.

Шал енчен кĕрĕке çавăн пекех бензинпа йĕпетнĕ щеткăпа тасатма пулать. Бензина кăштах кĕпе çумалли порошок хушăр.

Тасатнă хыççăн йĕпеннĕ кĕрĕке хĕвел çинче, вĕри кăмака патĕнче е вут çывăхĕнче типĕтме юрамасть!

*02 ПĔЛТЕРЕТ * 02 ПĔЛТЕРЕТ * 02 ПĔЛТЕРЕТ * 02 ПĔЛТЕРЕТ*

### Чи пысăк ĕмĕт - авторезина

Çав каç пуçаруллă мăшăрсемшĕн - малтан судпа айăпланнă К. тата унпа пĕр каварлă Т. çурма ăнăçлă кăна пулнă. Вĕсем 1-мĕш номерлĕ куçса çӳрекен механизациленĕ колонна территорийĕнче вырнаçнă Пĕкĕлме организацийĕн складĕнчен вăрланă авторезинăсене мĕнле тупăшлăрах сутасси çинчен шухăшласа пынă вăхăтра вĕсен хыçалти ларкăчисене илнĕ "шестеркине" милицин патруль ушкăнĕ чарнă. Вĕсен 18 авторезинине тӳрех туртса илнĕ, 5 резина тата 3 михĕ сахăр песукне К. тата Т. инçех мар пытарма ĕлкĕрнĕ. Ахалех! Вăхăта кăна сая янă. Вăрланине каялла тавăрса парса, вĕсене хăйсен пурлăхне лайăхрах сыхлама хушнă.

### Тавăрас текенсене тытса чарнă

Эрех ĕçнĕ тата тăванĕшĕн пăшăрханнă пĕртăван С. çĕрле икĕ сехетре Мамăк ялĕнче пурăнакан К. патне пырса кĕнĕ те ăна кирлĕ пек тавăрма шутланă. Куракансем, илтекенсем ан пулччăр тесе, ăна "КамАЗ" çине лартса хире илсе кайнă, анчах та К. тарма ĕлкĕрнĕ. Тавăрас текенсем - пĕри Черемшанран, иккĕмĕшĕ Çĕнĕ Шешмаран, виççĕмĕшĕ Мамăкран - вĕсене ГРОВДăн дежурнăй ушкăнĕ тытнă.

### Атьăр-ха хамăра ыйту парар...

Уйрăм çынсен машинисем шучĕпе пуяс текенсем халь сахал мар, уйрăмах хулари çула çитмен ачасем хушшинче, вĕсенчен хăшĕ-пĕри РФ Уголовнăй кодексĕн статйисемпе паллашнă ĕнтĕ.

Хăшĕ-пĕрисем хăйсен машинисене пĕр хăрамасăр урамра лартса хăварнипе усă курса, çамрăксем вĕсен магнитофонĕсене, тĕкĕрĕсене вăрлаççĕ, урапisene кăлараççĕ, бензинсене илеççĕ... Кайран вара вĕсене палланă тата палламан çынсене йӳнĕ хакпа сутаççĕ те эрех, пирус туянаççĕ. Çавăн пек тĕттĕм каçсенчен пĕринче ГРОВД сотрудникĕсем çула çитмен С. тата Е. вăрланă япалапа тытнă. Çамрăксене явап тыттарĕç, анчах та ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ывăлĕ çурçĕр иртсе икĕ сехетре те килне таврăнман пулсан, ачи ăçта çӳретши тесе кăсăкланаççĕ-ши?

### Тапăнакансем УВД сотрудникĕсем пулнă

Самарти УВД патруль службин икĕ сотрудникĕ Пӳлеркӳлĕнчи "КамАЗ" водителĕпе "Полесье" трактористне тапăннă. Эрех ĕçнĕ сержантсем тата вĕсен тăванĕсем каçхине Хурамал ялне каяс тенĕ те "КамАЗ" автомашинăпа усă курма шутланă. Пысăк тиев турттаракан машина водителĕ тата тракторист вĕсене леçсе хăварма хирĕçленĕ те лешсем ҫара автомашина кабинине кĕрсе иккĕшне те хĕнеме тытăннă. Водитель кабинăран Кушкă районĕн территорийĕнче çеç сиксе юлма пултарнă, тракторист "КамАЗ" машина кабининче темиçе сехет иртсен кăна тăна кĕнĕ... Нурлатри ГРОВД сотрудникĕсем тапăнакансем камсем пулнине палăртнă. Уголовнăй ĕç пуçарнă.



Эх, çакна вырăнтан хускатасчĕ...

### Усăллă канаш

***Йывăр шифоньерпа кĕнеке шкафне вырăнтан вырăна куçарас умĕн вĕсен урисем айне кĕленче банкăсен полиэтилен хупписене хурса тухăр. Урайне йĕпетнĕ супăньпе сăтăрса илĕр. Çакнашкал майпа йывăр сĕтелпукана та куçарма çăмăл пулĕ.***

***Хваттерти йывăр сĕтел-пукан айне кивĕ утиял хурса та куçарма пулать, урай хăмисем те шăйрăлмаççĕ.***

## Пĕлтерӳсем

**Сутатпăр:**

**Туй кĕпи. Телефон: 5-22-92.**

* * *

**Районти тĕп больницăн "Сывлăх" юлташлăхĕнче дача. 5-12-53 номерпе 20.00 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

* * *

**Чапаев урамĕнчи 19-мĕш çурт, çутçанталăк газĕ, шыв кĕртнĕ, ытти вариантсем те пулма пултараççĕ, 17.00 хыççăн пымалла.**

* * *

**5х5 калăпăшлă пура. Мамăк ялĕнче Федоровран ыйтса пĕлмелле. Телефон: 4-12-13.**

**Сутăн илетпĕр:**

**Пĕр пӳлĕмлĕ хваттер. 2-20-38 номерпе 17.30 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

**Улăштаратпăр:**

**Икĕ пӳлĕмлĕ хваттере пĕр пӳлĕмлипе, хушса тӳлесе. 2-20-38 номерпе 17.30 сехет хыççăн шăнкăравламалла**

* * *

**Виçĕ пӳлĕмлĕ çурта Çыранçи Чаллăри е Анат Камăри 2 пӳлĕмлĕ хваттерпе. Пĕрремĕшпе юлашки хутсене сĕнмелле мар. Адрес: Нурлат хули, Тельман урамĕ, 34"а", ĕлĕкхи кинопрокат патĕнче.**

**Тĕрли:**

**Строительсем çинчен информаци паратăп (тӳлевсĕр). Çуртсем, гаражсем, хушма çуртсем тăваççĕ, шăратса çыпăçтармалли ĕçсем пурнăçлаççĕ. Телефон: 5-16-25, Назип.**

**Тара паратпăр:**

**Уйрăм çурт. Кутузов урамĕ, 12 "а". Лермонтов урамĕнчи 31-мĕш çуртра ыйтса пĕлмелле.**

**Вăрăмăшĕ 30 см. ытла çӳç пĕр кун кăна сутăн илеççĕ. Сире октябрĕн 2-мĕшĕнче ирхине 9 сехетрен тытăнса 17 сехетчен кĕтеççĕ. Адрес: Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", хĕрарăмсен залĕ.**


**Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Л.Р.ФЕДОРОВА.**

**Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ**

**Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.**

**ПИРĔН АДРЕС:** 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
**ТЕЛЕФОНСЕМ:** редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

**Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.**

**Регистрациленĕ номерĕ 34.**

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4005